Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

# Производствăна ӳстересси – тĕп вырăнта

**«Агропромышленность комплексне аталантарасси» приоритетлă нацпроект ĕçлеме пуçланăран районти АПКна çĕнĕ варкăш пырса кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн «тухăçлă мар» выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те ура çине тăма пуçларĕ. Выльăхсене çĕнĕлле условисенче тытасси, çĕнĕлле тăрантарасси, çĕнĕ сарайсемпе фермăсем çĕклесси кун йĕркине кĕчĕ. Иртнĕ кунсенче ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн Кашмашри сысна ферминче пурнăçа кĕчĕ. Ял çынниcемпе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх йышлă тытнă май, вĕсене ветеринари тĕлĕшĕнчен пăхса тăрасси выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ĕçченĕсем çине тиенет. 13 ветеринари участокĕпе пĕрлех райцентрта вырнаçнă ветстанци те районти сывлăх сыхлавĕшĕн ответлă пулса тăрать. Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир кунта ĕçлекен хĕрарăмсен ушкăнне куратăр. Шăпах вĕсем ĕнтĕ выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин никĕсĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕпе саламлатпăр вĕсене.**



Çуркунне çитнĕ май ялсенче ĕнесем пăруласси йышланчĕ. Ĕнене çур пурнăç тесе хаклать хресчен. Çак вăхăтра ун çине ытларах тимлĕх уйăрмалли пирки те, мĕнрен асăрханасси çинчен те пĕлмелле. Районти ветстанцири А. Федорова ветврач-терапевтăн малалли калаçăвĕ ĕнесене пăрулама хатĕрлесси тата пăруланă хыççăнхи ĕçсем пирки пулĕ.

Пăруламалли ĕнесем тимлĕх ыйтни куçкĕрет. Кунта вĕсене кунсерен уçă сывлăшра çӳретесси тĕп вырăнта пулмалла. Çакă ĕнесен организмĕнче япаласен ылмашăвне йĕркелесе пыма пулăшать. Ахальлĕн хырăмри пăру аталанăвĕ пăсăлать, вĕсем вăйсăр çуралаççĕ, чирлеслĕхĕ пысăк пулать.

Ĕнесем пĕтĕ чухне организмри минераллă япаласен ылмашăвĕ пăсăлни шăмăсем патракланни патне илсе çитерет. Çавăнпа та ĕнесене пăруличченхи тапхăрта минераллă хутăшсем парасси кун йĕркинчен тухмалла мар. Выльăхсене сивĕ шыв ĕçтерессинчен те асăрханмалла.

Ĕне пăруличченхи 6-8 эрнере ăна сума пăрахни выльăха канса илме май парать. Ку вăхăтра вĕсен рационĕнчен сĕт антарма пулăшакан (çăнăх, выльăх кăшманĕ т. ыт. те) апатсене кăлармалла. Тивĕçлĕ рацион ĕнен пăруланă хыççăнхи сĕт антараслăхĕ çине витĕм кӳрет. Шайлашуллă рацион хырăмри пăрăва та тивĕçлĕ ӳсме пулăшать, пулас сĕт пахалăхĕ çине витĕм кӳрет.

Ĕнене тин кăна çуралнă пăрăва çуллама чармалла мар. Çапла майпа ĕне пăрăва массаж тăвать, типĕтет. Выльăхсене çил вылявĕсĕр типĕ пӳлĕмре тытмалла. Малтанхи кунсенче пĕчĕкрех виçепе ĕнене витаминсемпе пуян утă, хывăх памалла. Ĕнене те, пăрăва та тăтăш пăхса тăмалла, ирпе-каçпа ĕнен ӳт температурине виçмелле. Унăн нормăри виçи – 37,5-39,5 градус. Температура çак виçерен чакни парез патне илсе пырать. Çак инкекрен пăрăнмалли çул-йĕр – ĕнесене пăруличчен уçă сывлăшра тăтăш çӳретни тата паха апатпа тивĕçтерни. Ĕне чир инфекцийĕсенчен сыхлантăр тесен унăн айĕнче яланах ытлă-çитлĕ типĕ улăм пулмалла. 3-6 кунтан йĕркеллĕ пăруланă ĕнене уçăлма кăларма пуçламалла. Пăруличчен те, пăрулаcан та ĕнене пурă, витаминсемпе микро-, макроэлементсем памалла, (вĕсем: фелуцен, гаврюша, буренка, элеовит, тетравит т. ыт . те).

Пăруланă ĕнен 4-6 сехетре çӳпĕ пăрахмалла. Пăруласанах çилĕне лайăх çуса илсе дезинфекциллĕ хутăшпа йĕпетнĕ алшăллипе шăлса типĕтнĕ хыççăн 2 сехет хушшинче чĕчĕсенчи сĕте темиçе туртăм суса илсе ăна тăкмалла та кайран пăрăва ĕмĕртмелле. Пăруланă хыççăнах ĕнене пылак ăшă шыв пĕр витре памалла.

Çирĕп пăру илни тата ĕнен сывлăхне сыхласа хăварни хуçалăхсен экономикине тĕреклетме пулăшĕ çеç.

Савнă çыннăмăра савса

# Çыру çыртăм васкаса

Салам, юратнă аннеçĕм! Акă черетлĕ кун хĕвел çутипе тулчĕ. Пурнăç илемлĕ. Паянхи савăнăçлă кун эпĕ сана мĕн каласшăн-ха?.. Хама кун çути панă тата пурнăçри йывăрлăхсене пăхмасăр ӳстерекен анне. Эсĕ нихăçан та ан чирле, пирĕнпе юнашар нумай çул пурăн, ялан пурнăç тулăхĕпе тата хĕвел çутипе савăн.

Мана пурнăç парнеленĕшĕн çĕре çити тайма пуç сана. Эпĕ час-часах кӳрентеретĕп пулĕ сана. Каçар. Мĕншĕн тесен кашнинчех хам тĕрĕс маррине ăнланатăп...

Эпĕ сана кун пирки сайра калатăп, анчах паян сан умра çак сăмахсене пытараймастăп: эсĕ маншăн чи хитри, чи çепĕççи, чи ĕçченни, кирлĕ вăхăтра пулăшупа чи малтан çитекенни. Çĕр çинче мĕнле ырă сăмах пур, паян вĕсем йăлтах сан валли, сан валли...

Эсĕ мана мĕншĕн юратнине пĕлетĕп. Çĕр çинчи кашни чĕрĕ чунăн амăшĕ хăйĕн пепкине савать, уншăн тăрăшать. Пурнăçра темĕн пулас пулсан та, эпĕ сана çеç юратăп, санра пурнăçри çăлăнăçа, йывăр вăхăтри пулăшăва курăп. Мĕншĕн тесен эсĕ манăн чи çывăх çын, чи пархатарлă тус, пуринчен илемлĕ хăват. Эсĕ эпир пĕчĕккĕ чухне ирĕн-каçăн пирĕн çумра лараттăн, кăпăшке та çепĕç аллусемпе чирчĕре ирттереттĕн, ачашласа лăпкăн çывратса яраттăн. Эсĕ пире юратнă, халĕ эпир те сана юрататпăр. Сана тав туса çĕнĕ сăвă çыртăм.




### Чăваш чĕлхи

Анне сăн-пичĕ куç умĕнче тăрать,
Унăн тути тăтăш йăл кулать,
Куçĕ ялан çуталать,
Чĕри лăпкăн савăнать.
Ларса канма та пĕлмест,
Кунĕпе ĕçре тимлет,
Тӳшек пек çемçе алли
Тăрăшать пире валли.
Кайăк пек çӳхе сасси
Янăрать ман хăлхара.
Анне вăл чĕре ăшши,
Чи хакли вăл пурнăçра!

**Сăн ӳкерчĕкре: Çатракассинчи вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренекен Екатерина Терентьевапа чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Л. Никитина чĕлхе ыйтăвĕсемпе час-часах тĕл пулса калаçаççĕ. «Тăван чĕлхене юратни сăвă çырма пулăшать», – терĕ хăй пĕрремĕш сăвăна 3-мĕш класра Çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа çырнине палăртса Катя. Паян сирĕн умăрта унăн черетлĕ ĕçĕ.**

Пур çĕрте те пултарулла

# Ăшă кăмăлпа ырă ĕç тăваççĕ

«Çынна тумтирпе кĕтсе илеççĕ те ăсне кура ăсатаççĕ», – тет ваттисен сăмахĕ. Çак тĕрĕслĕхе, паллах, никам та хирĕçлемĕ. Каларăша анлăрах сарсан та вăл вырăнлах юлать. Ăса тата çынлăха мала хуракан çынпа тĕл пулу ăнăçлăрах иртет, чуна уçса калаçнă сăмахсем кун йĕркинчи йывăрлăхсене иккĕмĕш вырăна хăвараççĕ. Çакăн хыççăн ытти çынсемшĕн ытларах та ытларах юрăхлă ĕçсем тăвас килет, ыранхи кунпа пурăнма хавхалану ӳсет. Çакăн пек туйăмсене ăша хывса тухрăм та эпĕ иртнĕ кунсенче Муркаш райповĕн Отарккăри куллен кирлĕ таварсен магазинĕнчен. Шăпах кунтан пуçланмасть-и-ха ял культури, ялсен аталанăвĕ çакăнти хăтлă та кăмăллă хутшăнусенчен вăй илмест-и-ха, тавар туяннă май ирттернĕ ăшă калаçура тымарланмасть-и-ха наци проекчĕсене пурнăçлассипе тĕвĕленекен черетлĕ туйăм? Кам епле хурав парĕ те, анчах шăкăл-шăкăл калаçу пысăк шанчăк çуратнине никам та хирĕçлемĕ. Пирĕн кулленхи пурнăçра вара час-часах шăпах çавă çитмест те. Кайран вара чавса çывăх та – çыртма çук.

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Любовь Петровна Корчагинапа Нина Ионовна Митрофанова пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ М. Ниткина ертсе пыракан асăннă магазинра сутуçăра вăй хураççĕ. Ĕç коллективĕнчи килĕшӳлĕх тата тавар туянакансемпе йĕркеленнĕ ăшă кăмăллă хутшăнусем сутуçăсене тăтăшах ĕç планне пурнăçласа пыма пулăшаççĕ. Çапла вара ырă ĕçпе палăрса тăраççĕ вĕсем ял хушшинче. Ĕçре маттур хĕрарăмсем çав вăхăтрах пултаруллă ача амăшĕсем те. Çуткӳлте 4 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Любăн ывăлĕ паян 5-мĕш класа каять. Măн Токшикра 4 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Нинăн хĕрпе ывăлĕ тăван килĕнчен вĕçсе тухнă ĕнтĕ: Света паян Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студентки, Рудольф техучилищĕре строителе вĕренет.



–Коллективра эпир кăна мар вĕт. Пĕтĕмпе эпир магазинта тăваттăн ĕçлетпĕр, сменăпа. Пирĕн тепĕр юлташ – Алина Иосифовна Харитонова. Ял хĕрарăмĕн кун каçа ларса тăма пĕлмесĕр ĕçленипе пĕрлех çĕр-шыв пуласлăхне ура çине тăратмалла. Хамăра çак ĕçре мăшăрăмăрсем пулăшнине те паян палăртмасăр хăвараймастпăр. Ача çуратса ăна тĕрĕс-тĕкел ӳстересси вăл пĕччен пурнăçламалли ĕç мар, – терĕ сентре умĕнчен йăпăртлăха уйрăлнă Л. Корчагина сутуçă. Кунта хушса каламалли нимĕн те çук. Сăмах май М. Ниткина 2 ача, А. Харитонова пĕр ача воспитани парса ӳстереççĕ.

Ăнăçу пултăр Сире, маттур хĕрарăмсемпе хастар ача амăшĕсем! Ыранхи уяв вара шăпах сире валли! Сирĕн чунăрсенче яланах çуркунне хуçалантăр, чĕлхĕр çинче чĕвĕл чĕкеç калаçтăр.

**Анатолий БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ветеран аса илет

# «Пурнăç çулĕ çăмăл пулмарĕ»

**90 çулхи ĕç ветеранĕ Татьяна Васильевна Андреева Мемеккасси ялĕнче пурăнать. 9 ачаллă çемьере çуралнăскерĕн ачалăхĕ те, çамрăклăх çулĕсем те, ытти нумай-нумай ачасенни пекех, çăмăл килмен. Уйрăмах вăрçă вăхăтĕнче, ун хыççăн та йывăр килнĕ. Татьяна Васильевна редакцие ярса панă çырăвĕнче хăй утса тухнă пурнăç çулне аса илет.**

– 1940 çулта Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче 10 класс вĕренсе пĕтерпнĕ хыççăн Шупашкарти педагогика институтне биологи факультетне вĕренме кĕтĕм.

Педагогика институчĕн 1-мĕш курсне пĕтернĕ хыççăн вăрçă пуçланчĕ. Пирĕн пединститут çуртне салтаксене килсе вырнаçтарчĕç. Пирĕн вара Сĕнтĕрвăррине куçса каймалла пулчĕ. Унта 3–4 уйăх вĕреннĕ хыççăн Октябрьски района окопсем чавма илсе кайрĕç. Унта 4 уйăха яхăн ĕçлерĕмĕр. Нимĕççене Мускав патĕнчен хăваласа янă хыççăн март уйăхĕнче пире киле ячĕç.

1941–1942 çулсенче хĕлĕ питĕ сивĕ пулчĕ, 40–41 градус таранах. Чăтма та çукчĕ. Çи-пуç, ată-пушмак тавраш ĕçĕтĕлсе пĕтрĕç. Утиял татăкĕсене касса урасене чĕркеттĕмĕр. Çимелли те питĕ начарччĕ. Пĕр хут купăста шӳрпи çитеретчĕç, 400 грамм çăкăр тиветчĕ. Утнă чухне наçилкка алăран вĕçерĕнсе каятчĕ.

Шăнса пăсăлтăм. Манăн урасем шыçса кайрĕç. Киле килсе 2 эрне пек сипленкеленĕ хыççăн каялла Сĕнтĕрвăррине вĕренме кайрăм. Вĕренме кĕнĕ чухне пирĕн курсра 30 ача пулнă. 12-ĕн çеç вĕренсе пĕтертĕмĕр. Ыттисем йывăрлăхсене чăтаймасăр пăрахса кайрĕç. 1 арçын ачана вăрçа ăсатрăмăр.

Алла диплом илнĕ хыççăн мана ĕçлеме Калайкасси шкулне ячĕç. Каникул вăхăтĕнче эпир те колхоз уй-хирĕнче тăрăшаттăмăр: утă çулнă, типĕтнĕ, пухса кĕртнĕ, тырă вырнă т. ыт. те.

1943 çулхи ноябрьте мана КПСС Сĕнтĕр райкомне ĕçлеме ячĕç. Унтан партин Чăваш обкомĕ çумĕнчи 6 уйăхлăх шкулта вĕрентĕм. 4 çул хушши парти райкомĕнче пропагандист пулса ĕçленĕ. Кăпасра, Ювановăра политшкул пропагандисчĕ пулнă.

Час-часах колхозсене тухса çӳреме тивнĕ. Парти райкомĕн бюровĕ валли материалсем хатĕрлесе параттăм. Хальхи пек машинăсем пулман, çуранах çӳреме тивнĕ. Çамрăк чух, вăй пур чух, ĕçрен хăраман. Мĕн хушнă – çавна тунă.

1948–1969 çулсенче Вăрманкасси шкулĕнче малтан 1 çул завуч, кайран улшăнмасăр 20 çул хушши директор пулса ĕçлерĕм. Малтанах, вăрçă хыççăнах, ачасене вĕренме шкул та пулманччĕ, уйрăм çынсен çурчĕсенче вĕрентнĕ. Кайран вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе 160 вырăнлă типовăй шкул çуртне тума тытăнтăмăр. Патшалăх укçа паман, пама укçи те пулман. Çавăн чухне мана питĕ йывăр килчĕ. Строительство материалĕсене, ĕçлекенсене пĕтĕмпех хамăрăн тупмалла пулнă. Шкул çурчĕн никĕсĕ валли вĕренекенсемпе пĕрле çырмасем тăрăх чул пуçтарса турттарса килеттĕмĕр. Шкул пахчинче пахча çимĕçне те, çырлисене те çитĕнтереттĕмĕр, сутса укçа тăваттăмăр. Шашкар ял Советне ун чухне В.П. Павлов ертсе пыратчĕ. Вăл та шкул тума пулăшман мар. Пĕрле вара шкула хута яма май килчĕ. Сăмах май, халĕ В.П. Павлов Тренккăра пурăнать.

Ĕçленĕ çулсенче кашни созывра тенĕ пекех мана Шашкар ял Совет депутатне суйланă, район шайĕнче те депутат пулнă. Ӳркенсе ларман, çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе тимленĕ.

Хам ĕмĕрте хура-шурне сахал мар курнă. Чăтнă. Манăн мăшăр Петр Николаевич Каргин, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, инвалид, халĕ 7–8 çул хушши чирлесе пурăнать. Вăл шутран 2 çул ĕнтĕ ура çине те тăраймасть. 91 çулта хăй вăл. Пĕрле эпир иккĕн 63 çул пурăнатпăр. Питĕ йывăр инвалида пăхса пурăнма.

Манăн ĕçсене тивĕçлипе хакланă тесе шутлатăп. Мана «1941–1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи хастар ĕçшĕн», «Ĕç ветеранĕ» тата юбилей медалĕсемпе наградăланă.

Пирĕн вăхăтра пурнăç йывăр пулчĕ. Халĕ пурнăç лайăхланса пыни куçкĕрет. Шел пулин те, пурăнмалли нумаях юлмасть пулĕ. Çапах халăх хушшине тухса çӳрес, çынсемпе калаçас килет. Кăмăл та уçăлать кун пек чухне.